## Августăн 12-мĕшĕнче – Физкультурниксен кунĕ

# Çитĕнӳсем малаллах туртăнма хистеççĕ

Сывлăх – чи паха пуянлăх. Çирĕп сывлăхлă çын кăна пурнăçа туллин тытса пыма пултарать. Çавăнпа та сывлăха мĕн пĕчĕкренех упрамалла, ăна çирĕплетмелле



тата аталантармалла. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, ял тăрăхĕсем, физкультурăпа спорт организацийĕсем спорт ĕçне аталантарас, унта ытларах та ытларах çынна явăçтарас тесе тĕллевлĕ программăпа туллин ĕçлесе пыраççĕ.

Уйрăмах масăллă иртнĕ спорт ăмăртăвĕсене асăнас килет: “Раççей йĕлтĕр йĕрĕ – 2006”, Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн Кубокне çĕнсе илессишĕн иртекен йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ, В.М. Егорова парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен республика шайĕнчи çăмăл атлетика кросĕ, çавăн пекех Социализмла Ĕç Геройĕн Е.А. Андреевăн парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен республика шайĕнчи йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров спорт ĕçне аталантарассишĕн, çирĕп пурнăç йĕркине тытса пырассишĕн çакăнта халăхăн ытларах пайне явăçтарассишĕн тăрăшать. Çавăнпа та çакăнпа çыхăннă тĕрлĕ Указ кăларать.

Паянхи кун тĕлне физкультурăпа спорт тусĕсене аталанма 26 спорт залĕ ĕçлет. Вĕрентӳпе культура тата сывлăх сиплев центрĕнче бокс залĕ уçăлчĕ. Çавăн пекех районта 95 спорт сооружениййĕсемпе площадкăсем, 7 тир, 1 йĕлтĕр бази пур. Пĕтĕмпе вара спортзалсемпе тивĕçтересси 38 процент, спортплощадкăсемпе 57 процент шутланать.



Район администрацийĕ физкультурăпа спорт аталанăвĕ çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çак ĕçе пурнăçласа пыма 2006 çулта 730 пин тенкĕ укçа уйăрнă пулсан, кăçалхи çул татах та 70 пин тенкĕ ытларах уйăрма пăхнă. Иртнĕ çул спортпа çыхăннă мероприятисене ирттерме 16 ял тăрăхĕ валли 174 пин тенкĕ уйăрнă.

Иртнĕ çул массăллă разрядри 2262 спортсмена хатĕрленĕ, пĕрремĕш разрядлисем 4-ăн, Нина Охотникова Раççей спорт мастерĕн ятне тивĕçнĕ.

Спорт мероприятийĕсем тăтăшах пулса иртеççĕ. 2006 çулта район тата хуçалăхсем шайĕнче 60 спорт мероприятийĕ йĕркеленĕ.

Уйрăмах пуçаруллă ертӳçĕсене палăртса хăварас килет: Н.Г. Ванеркин (Муркаш чăх-чĕп фабрикин ертӳçи) тата Б.В. Андреев (Муркаш райповĕн ертӳçи, вăлах çăмăл атлетика федерацийĕн председателĕ) яланах спорт ăмăртăвĕсене хапăл туса йышăнаççĕ. Хăйсем те район шайĕнче ăмăртусем йĕркелеççĕ.

Ĕç çыннисен Спартакиадине ирттересси те ырă йăлара. Спартакиада çĕнтерӳçи “Моргаушрайбыт” команди пулчĕ. Призер ятне “Оринино” тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем илчĕç.

Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкул ушкăнĕн Спартакиадин çĕнтерӳçи ятне Калайкасси шкулĕ илчĕ. Призерсем вара Оринино тата Муркаш шкулĕсем.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул ушкăнĕн Спартакиадин çĕнтерӳçи Кашмаш шкулĕ пулчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Шурчасемпе Сосновкăсем пайларĕç.

Чăваш Республикинчи патшалăх влаç органĕн тата вырăнти хăйтытăмлăхра вăй хуракансен Спартакиадине 29 районсемпе хуласен командисем хутшăнчĕç. Муркашсем виççĕмĕш вырăна тивĕçрĕç.

Чăваш Республикинче волейбол енĕпе мала тухассишĕн ăмăрту иртрĕ. Пирĕн район пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Армспорт ăмăртăвĕнче вара Муркашсем иккĕмĕшсем пулчĕç.

Муркашри В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче ăсталăх пухнă çамрăк спортсменсем чăннипех те çӳллĕ шая çĕкленме пултарчĕç. Татьяна Моисеевана, Вера Соколована, Петр Трофимова, Василий Трофимова, Сергей Васильева, Александр Яргунькина чылайăшĕ ăмсанма пултарать. Тĕрĕссипе вара пур çитĕнĕве те асăнса та пĕтереймĕн. Çапах та паянхи кун тимлĕх ыйтакан ыйтусем те çук мар. Пире физкультура енĕпе ĕçлекен кадрсем тата спорт инвентарĕсем сахалтараххи пăшăрхантарать. Эпир вара пурпĕрех малалла туртăнма тăрăшатпăр. Малашне татах та ытларах спорт сооружениййĕсем çĕклеме пăхатпăр. Чылайăшĕ астăвать те пулĕ Лантăш вăрманĕнчи Акатуйра Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров пысăк парне пирки пĕлтернине. Вĕрентӳпе культура тата сывлăх сиплев центрĕнчи ĕçсене вĕçлеме, çавна май укçа-тенкĕ уйăрассине асăнчĕ. Сăмаха вĕçленĕ май вара эпĕ пурне те Физкультура ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе саламлатăп. Спортпа, физкультурăпа тачăрах çыхăну тытма сĕнетĕп.

**М. РОМАНОВ,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата спорт пайĕн тĕп специалисчĕ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: районта спорт ăмăртăвĕсем яланах массăллă иртеççĕ.**

## Ялти спорт клубĕ

# Сывă кĕлеткере – сывă туйăмсем



(Вĕçĕ. Пуçл. 6-мĕш стр.).

Петрпа Павел апостолсен кунĕ ячĕпе тĕрлĕ ăмăртусем иртрĕç.

Ялти клубра кире пуканĕ йăтакансем, алă вăйĕпе кĕрешекенсем валли спорт хатĕрĕсем пур, тренировкăсене аслă категориллĕ тренер И.В. Смоленцев ирттерет, шкул ачисене спорт вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарать.

Чи пултаруллисем районти, республикăри ăмăртусене хутшăнса, малти вырăнсене йышăнма пултарчĕç. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Шурчари тĕп шкулта вĕренекен Надежда Ивановапа Эмилия Шурнова, Калайкассинчи вăтам шкула çӳрекен Ирина Иванова алă вăйĕпе кĕрешессипе республикăри çамрăксен ăмăртăвĕсенче палăрчĕç. Н. Иванова Чăваш Ен Кубокĕнче 3-мĕш, Э. Шурновапа Н. Иванова 18 çултан иртнĕ аслă хĕрсем хушшинче республикăра мала тухассишĕн иртттернĕ ăмăртура 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене йышăнма пултарчĕç.

Кире пуканĕ йăтакансенчен Петр Халапсин, Александр Соловьев, Федор Иванов çамрăк пăхаттирсем республикăра призлă вырăнсене тивĕçрĕç.

Çăмăл атлетика ăмăртăвĕсенче Марта Ивановапа Татьяна Иванова районти чи лайăх çамрăк спортсменсен шутне кĕреççĕ, Таня тата йĕлтĕрпе чупассипе ăста.

Спортшăн каникул çук тесе çуллахи вăхăтра та канма пĕлмерĕç “Аталан-Т” спорт клубне ертсе пыракансем. Шкул пĕтерекенсене спорта хисеплекен вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕртесси пирки нумай тăрăшрĕç.

Августăн 12-мĕшĕнче, Физкультурниксен кунĕ тата Строительсен кунĕ ячĕпе спорт уявне ирттерме палăртрĕ клуб канашĕ. Уяв программинче – чупасси, кире пуканĕ йăтасси, турник çинче туртăнасси. Ачасем те спорт уявне чăтăмсăррăн кĕтеççĕ, унта хутшăнса мала тухма ĕмĕтленеççĕ.

**С. ИВАНОВ, спорт ветеранĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: республикăри турнир призерĕсем Э. Шурновапа Н. Иванова.**

## Общие показатели контрольной работы Межрайонной ИФНС России № 6 по Чувашской Республике за 1 полугодие 2007 года по Моргаушскому району

Общая сумма дополнительно начисленных платежей по результатам контрольной работы за 1 полугодие 2007 года составила 7674 тыс. руб., в том числе по выездным налоговым проверкам- 5691 тыс. руб., по камеральным налоговым проверкам - 363 тыс. руб. За аналогичный период 2006 года доначисленная сумма платежей во все уровни бюджета составила 10666 тыс. руб.

В соотношении видов платежей в структуре доначислений по результатам контрольной работы налоги составили за отчетный период -4117тыс. руб., пени по выездным и камеральным налоговым проверкам -956 тыс. руб., пени, начисленные за несвоевременную или неполную уплату налогов сборов -1620 тыс. руб., налоговые санкции - 981 тыс. руб.

В разрезе основных налогов результаты проверок 1 полугодия 2007 года следующие: налог на добавленную стоимость -1287 тыс. руб., налог на прибыль организаций-641 тыс. руб., налог на доходы физических лиц -3602 тыс. руб., единый налог на вмененный доход -198 тыс.руб., единый сельскохозяйственный налог- 148 тыс.руб., транспортный налог- 134 тыс.руб.

Нарушения налогового законодательства установлено в ходе выездных проверок у следующих налогоплательщиков : ООО “ Агроинвестсервис”, СХПК “Нива”, ООО “Декор, ООО “Дубрава,” ООО “Чăваш сăри”, ИП Пушкин В.И., ИП Дмитриев Ю. Н., СХПК им.Чапаева, ИП Тихонов Ю.Н., ООО “Агрофирма “Лидер”, ООО “Моргаушрайбыт”.

За 6 месяцев 2007 года в ходе оперативной работы проведена 121 проверка применения контрольно-кассовой техники при осуществлении наличных денежных расчетов и расчетов с использованием платежных карт, в том числе: у юридических лиц -75, индивидуальных предпринимателей -46.

В ходе проверок выявлено 15 нарушений в применении контрольно-кассовой техники и 9 нарушений порядка работы с денежной наличностью и порядка ведения кассовых операций (ст. 15.1 КоАП РФ).

По результатам проверок предъявлено финансовых санкций на сумму 635 тыс. руб., взыскано 411 тыс. руб. ( 64,7%)

Основными нарушениями по применению контрольно-кассовой техники являются:

-фактическое неприменение ККТ продавцами-кассирами и индивидуальными предпринимателями,

-неприменение ККТ в виду ее отсутствия (ремонта).

В рамках проведения оперативных рейдов проверено 2 строительные организации. Нарушений не установлено.

Межрайоннная ИФНС России №6 по Чувашской Республике сообщает, что на август месяц 2007 года установлен следующий график проведения семинар-совещаний:

- по Красночетайскому району-14.08.2007 года в 10.00 часов в здании администрации Красночетайского района;
- по Моргаушскому району-15.08.2007 года в 10.00 часов в здании налоговой инспекции;
- по Ядринскому району-16.08.2007 года в 10.00 часов в здании налоговой инспекции.

На семинарах будут рассматриваться следующие вопросы:

1.Правила заполнения платежных документов.
2.Представление отчетности по ТКС.
3.О представлении налогоплательщиками сведений о среднесписочной численности работников в налоговый орган.
4.Внесение изменений в ЕГРЮЛ и в ЕГРИП.
5.Разное.

**Начальник отдела выездных проверок С.А.ГОРЯЧЕВА.**

## Спорт

# Суперкубок иртет

Мăн Сĕнтĕр стадионĕнче августăн 11-мĕшĕнче Физкультурниксен кунне халалласа «Никита» уйрăм предпринимательпе М. Шуйцев ячĕпе хисепленекен клуб командисем хушшинче футболла выляссипе суперкубок иртет. Ăмăрту 19 сехетре пуçланать. Ыйтса пĕлмелли телефон: 2-24-65.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**О наличии свободного земельного участка**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения: без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:28 02 01:0139. Местоположение: участок находится примерно в 340 м. по направлению на юго-восток от ориентира ОМЗ-394, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Сарчаки, площадью 6000 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

**Уважаемые покупатели!!! Приглашаем Вас в магазин «Книги» и отдел «1000 мелочей» (Стройхозтовары) в здании бывшего магазина «Гастроном». В широком ассортименте школьно-письменные товары. Цены ниже рыночных! 1-2.**

**Продаю озимую пшеницу. Цена договорная. Тел.: 34-2-23; 34-2-48.**

**КПКГ «Агрокредит» предоставляет краткосрочные займы. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23. Тел.: 2-18-13. 2-10.**



**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Заместитель гл. редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 2,0 п. листа. Тираж 3465.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 10.08.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру МАКАРОВА Р.А.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.